Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчене тухать

49 (7903) № * Юн кун, 2011 ҫулхи ҫӗртме (июнь) уйӑхӗн 29-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Ҫамрӑк пулсан та ӑста, пултаруллӑ

***Ҫамрӑксем тӗрлӗ сферӑра ӗҫлеҫҫӗ: культурӑра, медицинӑра, производствӑра... Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан ҫамрӑк специалистсем «Россельхозбанк» уҫӑ акционерлӑ обществӑн Чӑваш Республикинчи филиалӑн 3349/11/10 номерлӗ Муркашри хушма офисӗнче вӑй хураҫҫӗ.***

***Любовь Леонидовна Решетникова (сулахайри) ку ӗҫре пӗр ҫул кӑна пулин те ӑсталӑхӗпе палӑрса тӑрать. Татьяна Анатольевна Серафимова хушма офисра иккӗмӗш ҫул ӑнӑҫлӑ тӑрӑшать. Пултаруллӑ специалистсем уйрӑм тата юридици ҫыннисене расчет ыйтӑвӗсемпе ӗҫлеме пулӑшаҫҫӗ. Ӗҫри ытти нумай-нумай ыйтупа та кирлӗ сӗнӳканаш пама пултараҫҫӗ.***

***Кунта ӗҫлекенсем клиентсемпе вашават пулнӑран ӗнтӗ «Россельхозбанкра» кредит илме те кӑмӑллӑ. Кредитсем вара тӗрлӗрен, вӗсен шутӗнче хушма хуҫалӑха аталантарма та, вӗренме те, васкавлӑ кредит та. Тепӗр чух кредит тӗрлӗ сӑлтавсене шута илсе поручительсемсӗр те илме пулать.***

***«Россельхозбанкӑн» пултаруллӑ коллективӗ сире яланах хапӑл туса кӗтет.***

**Н. НИКОЛАЕВА** сӑн ӳкерчӗкӗ.



Республикӑра

## Ӗҫ укҫи 6,5 процент чухлӗ ӳсрӗ

Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ июнӗн 15-мӗшӗнче «Чӑваш Республикин республика бюджетӗнчен укҫапа пулӑшса тӑракан Чӑваш Республикинчи патшалӑх учрежденийӗсенче ӗҫлекенсен ӗҫ укҫине ӳстерессi ҫинчен» 220 номерлӗ постановлени кӑларнӑ. Унпа килӗшӳллӗн 2011 ҫулхи июнӗн 1-мӗшӗнчен Чӑваш Республикин республика бюджетӗнчен укҫапа пулӑшса тӑракан Чӑваш Республикинчи патшалӑх учрежденийӗсенче ӗҫлекенсен оклачӗ (ставки) 6,5 процент чухлӗ ӳсет.

Ҫакӑн пек йышӑнусем муниципаллӑ учреждениесенче ӗҫлекенсен тӗлӗшпе те пулмалла.

Ӗҫ укҫи ӳснӗ хыҫҫӑнхи окладсене учреждениере ӗҫлекенсен ӗҫ укҫи пирки калакан Положенире палӑртса хумалла.

Аса илтеретпӗр, 2011 ҫулхи июнӗн 1-мӗшӗнчен ӗҫ укҫин чи пӗчӗк калӑпӑшӗ 4611 тенкӗпе танлашать.

Экономика

## «Чӑваш Енри ертсе пыракан организацисем»

Чӑваш Ресепубликин Экономика аталанӑвӗпе сутуилӳ министерстви «Чӑваш Енри ертсе пыракан организацисем» рейтинг туса хатӗрленӗ. Вӑл регион экономикинчи пӗтӗмӗшле ӗҫ туртӑмне тата уйрӑм структурӑсенчи аталанӑва тишкерме май парать.

Рейтинга калӑпӑшлӑ пилӗк кӑтарту тата пахалӑхлӑ икӗ кӑтарту ҫине тайӑнса хатӗрленӗ. Тӗрлӗ кӑтартусем вӑл е ку организаци республика экономикинче мӗнле пай хывнине те палӑртма май параҫҫӗ.

Пирӗн районти предприятисем те ҫак рейтингра тӗрлӗ вырӑн йышӑнаҫҫӗ:

- «Сеспель» Шупашкарти предприяти» акционерсен хупӑ пӗрлешӗвӗ – 12-мӗш вырӑнта;
- Муркаш райповӗ – 36-мӗш вырӑнта;
- Мӑн Сӗнтӗр райповӗ – 57-мӗш вырӑнта;
- «Моргаушская» чӑх-чӗп фабрики» акционерсен уҫӑ пӗрлешӗвӗ – 65-мӗш вырӑнта;
- «Муркашри кирпӗч завочӗ» акционерсен уҫӑ пӗрлешӗвӗ – 111-мӗш вырӑнта.

Республика кунӗнчен

## Уявӑн малтанхи пӗтӗмлетӗвӗ

Ҫӗртме уйӑхӗн 22–26-мӗшӗсенче Чӑваш Енре пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулӑмсем иртнӗ. Регионсен хушшинчи «Регионсем – пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлесси» XVIII курава Раҫҫейри 28 регион тата чикӗ леш енчи 10 ҫӗр-шыв представителӗ хутшӑннӑ. Федерацин 13 субъекчӗ – пӗтӗмпе 300-е яхӑн экспонент – хӑйсен экспозицийӗсене тӑратнӑ. Пӗтӗмӗшле курав лапамӗ 3764 тӑваткал метрпа танлашнӑ. Курав вӑхӑтӗнче килӗшӳсене алӑ пусса ҫирӗплетнӗ, малтанлӑха килӗшсе таталнӑ. Уйрӑммӑн илсен Вӑрнарти хутӑш препаратсен завочӗ 5 млн. тенкӗлӗх контракт тунӑ, «Агромашхолдинг» АУО – 7 млн. тенкӗлӗх.

Шупашкарти IV экономика форумӗ вӑхӑтӗнче 12 «ҫавра сӗтел», 6 сесси, 2 конференци, 2 секци, ҫамрӑксен форумӗ тата семинар иртнӗ. Пысӑк инвестици проекчӗсене пурнӑҫлас ыйтусене сӳтсе явнӑ. Ҫӗнӗ инвестор «Сувар» хӑна ҫуртне вӗҫлемелли проекта тӑратнӑ. Ҫавӑн пекех форум вӑхӑтӗнче Шупашкарта Пӑр кермен тӑвас тавра калаҫнӑ. Республика кунне уявлана тапхӑрта «РЖД» АУО делегацийӗ килнӗ. Калаҫусем вӑхӑтӗнче ЧР Министрсен Кабинечӗпе «Раҫҫей чукун ҫулӗсем» компани хушшинче 2011–2013 ҫулсене Килӗшӳ алӑ пусса ҫирӗплетесси ҫинчен таталнӑ. Виҫӗ ҫулта 20 млрд тенкӗлӗх продукци тӑратма палӑртнӑ. «IV экономика форумӗ экономика тӗлӗшӗнчен тӳремӗнех 40 млрд тенкӗ ытла тупӑш кӳчӗ», – палӑртнӑ Экономика аталанӑвӗн министерствин пуслӑхӗ Иван Моторин.

Пӗтӗм Раҫҫейри «Раҫҫей ҫӑл куҫӗсем» фестивале ҫӗр-шывӑн 27 регионӗнчи тата чикӗ леш енчи 2 ҫӗр-шыври пултарулӑх коллективӗсем хутшӑннӑ. Пӗтӗм Раҫҫейри «Ӑстасен Русӗ» IX конкурс Раҫҫейӗн 19 регионӗнчи, ҫав шутра Чӑваш Енри те, 49 ӑстана пухнӑ.

Выльӑх апачӗ хатӗрлетпӗр

## Утӑ уйӑхне кӗретпӗр

Райадминистрацин ял хуҫалӑх пайӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх июнӗн 28-мӗшӗ тӗлне нумай ҫул ӳсекен курӑксене 1103 гектар (19 процент) ҫулнӑ. Утӑ 520 тонна (9,5 процент) хатӗрленӗ.

Ҫӗр улми 934 гектар (73 процент) чӗрнӗ.

Ытлари куна сенажпа силос хатӗрлемен.

Ҫур ҫӑва ҫитрӗмӗр. Апла пулсан выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫсене хӑвӑртлатма кирли куҫ кӗрет. Ҫанталӑк лайӑх тӑнипе те пӗлсе усӑ курмалла.

Танлаштарма пӗр тӗслӗх. Кӳршӗри Элӗк районӗнче утӑсӑр пуҫне 350 тонна сенаж, 2630 тонна силос хатӗрленӗ.

Ҫамрӑксем суйлаҫҫӗ

## Вӗренӳ – малашлӑхӑн никӗсӗ

Тӗллевлӗ майпа вӗренме каякансем районта кашни ҫулах пур. Район администрацийӗн вӗрентӳ пайӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх ятарлӑ документсем хатӗрлесе ҫак направленипе вӗренме кӗнисем каялла района ӗҫлеме таврӑнма шантарса район администрацийӗпе килӗшӳ тӑваҫҫӗ. Унта вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн 3 ҫул районта ӗҫлемеллине палӑртаҫҫӗ.

Ҫак вӑхӑта Чӑваш патшалӑх педагогика университетне тӗллевлӗ майпа вӗренме каяссине 2 выпускник пӗлтернӗ. Медицина колледжне тӗллевлӗ майпа вӗренме кӗме икӗ абитуриент направлени илнӗ. Кунсӑр пуҫне педагогика колледжне вӗренме каяс текенсем виҫӗ ҫын пур.

Чӑваш патшалӑх университечӗн тӗрлӗ факультечӗсене тӗллевлӗ майпа вӗренме кӗме направлени илес текенсем кая юлман-ха. Ку таранччен направлени илнисенчен ытларахӑшӗ медицина специальноҫӗсене суйласа илнӗ. Малалла вӗренме каяс текенсен хушшинче финанспа кредит сферине суйласа илнӗ ҫамрӑксем те пур.

Чӑваш патшалӑх университетне тӗллевлӗ майпа вӗренме кӗме направлени илме район администрацийӗн вӗрентӳ пайне июнӗн 20-мӗшӗччен пырса ӗлкӗрмелле.

**Н. АНДРЕЕВА.**

Республикӑра

## Патшалӑх премийӗн лауреачӗсем

Республика кунӗ умӗн М. Игнатьев Президент Чӑваш Республикин патшалӑх премийӗсене, Раҫҫей Федерацийӗн тата Чӑваш Республикин патшалӑх наградисене тивӗҫнисемпе тӗл пулнӑ. Республикӑри тӗрлӗ ӗҫре вӑй хуракан 35 ҫын – механизаторсенчен пуҫласа техника наукисен докторӗ таранах – Президент аллинчен пысӑк наградӑсене тивӗҫнӗ. Техника наукисен докторӗ вара шӑпах пирӗн ентеш – Михаил Васильевич Петров.

Вӑл Чӑваш патшалӑх университечӗн строительство конструкцийӗсен кафедрин профессорӗ, Чӑваш Республикин вӗрентӗвӗн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, ӗҫ ветеранӗ, ЧПУн диссертаци канашӗн членӗ. Михаил Васильевич 1940 ҫулхи октябрӗн 20-мӗшӗнче Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхӗнче кӗрекен Токшик ялӗнче ҫуралнӑ. 1964 ҫулта Хусанти химипе технологи институтне пӗтернӗ. 1972 ҫулхи мартӑн 9-мӗшӗнчепе И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университетӗнче вӑй хурать.

Унпа пӗрлех Чӑваш Республикин патшалӑх премийӗн лауреачӗсем пулма «Сеспель» предприяти ӗҫченӗсем те тивӗҫнӗ. Профессорпа пӗрле тачӑ ҫыхӑнура вӑй хурса вӗсем ҫурма прицеп цистернӑсен 10 тӗрлӗ конструкцине шутласа кӑларса производствӑна тӑратнӑ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Саламлатпӑр



Хаклӑ та юратнӑ аннене, кукама, мамака – Пиккиксси ялӗнче пурӑнакан **Анфиса Гавриловна ЖИРНОВАНА** 85 ҫулхи юбилей ячӗпе ӑшшӑн саламлатпӑр. Тавах сана ырӑ кӑмӑлушӑн,чун ӑшшине пире панӑшӑн. Сывлӑху ҫирӗп пултӑр, кӗрекӳ ҫӑкӑр-тӑвартан нихӑҫан та ан таталтӑр, ачусен, мӑнукусен ырлӑхне курса савӑнмалла пултӑр.

**Саламлаканӗсем: ывӑлӗпе кинӗ, хӗрӗпе кӗрӳшӗсем, мӑнукӗсем, кӗҫӗн мӑнукӗсем.**



Хисеплӗ те юратнӑ ҫыннӑмӑра – Кив Матьӑк ялӗнче пурӑнакан **Геннадий Николаевич НИКОЛАЕВА** 60 ҫулхи сумлӑ юбилей ячӗпе чунчӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Ырлӑх-сывлӑх, иксӗлми телей, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр. Тайма пуҫ сана, аттемӗр. Эсӗ пурри нимӗнпе виҫейми пуянлӑх, савӑнӑҫ, телей. Кун-ҫулу вӑрӑм та такӑр килтӗр. Ачусен, мӑнукусен ырлӑхне курса савӑнмалла пултӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, хӗрӗпе кӗрӳшӗ, ывӑлӗпе кинӗ, мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем.**



Хаклӑран та хаклӑ ҫыннӑмӑра – Отаркка ялӗнче пурӑнакан **Нина Николаевна АФАНАСЬЕВАНА** сумлӑ юбилей ячӗпе ӑшшӑн саламлатпӑр. Пурнӑҫра вӑрӑм ӗмӗр, ҫирӗп сывлӑх, ӑнӑҫу сунатпӑр. Санпа мухтанатпӑр, эс пурришӗн чунтан тав тӑватпӑр.

Пӗрле савӑнмалӑх хавас пул ялан,<br>
Ӗҫу ӑнса пытӑр, ан чактӑр вӑй сан.<br>
Сана хӗвел пахтӑр савса, юратса,<br>
Телей кӑна пултӑр хальхи пурнӑҫра.

**Саламлаканӗсем: хӗрӗсемпе кӗрӳшӗсем, ывӑлӗ, мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем.**

Ярмарка

SUZUKI Way of Life!

**Организация Автопробега в Моргаушском районе от официального дилера Suzuki и ТагАЗ**

**Уважаемые жители Моргаушского района!**

**1 июля 2011 года официальный дилер Suzuki и ТагАЗ компании «Стар21.ком» проводит для жителей района незабываемую программу Автопробега.**

**Вас ожидает:**

**- возможность бесплатного прохождения тест - драйва на автомобилях Grand Vitara, Swift, Sx-4 и Vortex Tingo.**

**- большой праздничный концерт;**

**- розыгрыш призов;**

**- боди-арт для детишек.**

**Начало мероприятия состоится в 9.00 ч. на площади ФСК «Сывлӑх».**

**Ждем Вас всех на Автопробеге!**

# Вакансисен ярмăрккин усси курăмлă

## Районти ĕçпе тивĕçтерекен центрта

Хальхи вăхăтра ĕç тупас ыйту тĕрлĕ професси тата тĕрлĕ ӳсĕмри çынсене те пырса тивет. Çамрăксемшĕн ку ыйту уйрăмах çивĕч тăрать. Аслă шкулсенчен тата вăтам профессиллĕ пĕлӳ паракан вĕрентӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухнă яш-кĕрĕм паян тесен паянах ĕçе кӳлĕнме хатĕр. Анчах та ĕç тупма çăмăл мар.

Ĕçе вырнаçас ыйту йывăррисен шутĕнче пулнине тĕпе хурса районти ĕçпе тивĕçтерекен центр тĕрлĕ майсем шыраса ĕç шыраканпа ĕç паракана тĕл пултарать. Вакансисен ярмăркки çак ĕçре палăрăмлă вырăн йышăнать. Çапла вара ĕçпе тивĕçтерекен центр хăйĕн ĕçĕпе тĕплĕнрех паллаштарнипе пĕрлех çамрăксене те пулăшать.

Вакансисен ярмăрккин лайăх енĕ чылай. Ĕçпе тивĕçтерекен хăйĕн организацинче вакансисене палăртать, ĕç шыракан хăй пурнăçлама пултаракан ĕç пирки тĕплĕнрех пĕлет. Ярмăркка ĕç шыракана ĕçпе тивĕçтерекенпе çывхартать. Ĕç шыракан çын ярмăркка вăхăтĕнче пирĕн центрти ĕçченсенчен ятарлă консультаци, профинформаци илме пултарать, е тата – ĕçе направлени те. Çапла вара ĕç шырас вăхăт та перекетленет.

Çамрăксене ĕçпе тивĕçтерессинче вĕренĕвĕн тата ĕç вакансисен ярмăрккисем – малашлăха хатĕрленме пулăшакан утăмсем. Çулсеренех ĕçсĕр çамрăксен йышĕ ӳссе пыни вĕсем ĕçлес правăна пурнăçлама килĕшменнипе мар, ĕç тупма йывăрланса пынипе çыхăннă. Алла диплом илнĕ выпускниксем – çамрăк, хастар, профессие теори енчен ытларах пĕлекенскерсем – ĕçлеме хатĕр. Анчах та ĕç рынокĕнче вĕсене асăннă пахалăхсемсĕр пуçне тата ĕç опытне пухма ĕлкĕрнĕ конкурентсем кĕтеççĕ. Нумай чухне ĕç шыракан çамрăк специалист ĕçе илнĕ чух ăна та тавар пекех хакланине ăнкарса илеймест-ха. Ĕçпе тивĕçтерекен вара шăпах чи пахалăхлă «тавар» шырать те суйласа илет. Районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ĕç вырăнĕсен ярмăрккисене йĕркелени çамрăксене вăхăтлăх е яланлăх ĕç тупма пулашать. Çакăн йышши ярмăрккăсенче çамрăксем вĕрентӳ заведенийĕсем пирки те, урăх професспе вĕренсе тухма май пурри пирки те ытларах информаци илме пултараççĕ. Тĕрлĕ тестсен ыйтăвĕсене хуравласа, психологсемпе юристсен сĕнĕвĕсене шута илсе хăйсене ĕç параканпа еплерех тытмалли тата ытти пирки те тĕплĕн пĕлме пултараççĕ.

Ĕçпе тивĕçтерекен центр йĕркелекен ярмăрккăсем яланах тӳлевсĕр иртеççĕ. Кризисченхи çулсенче çакăн евĕр ярмăрккăсем çулталăкра иккĕ çеç иртнĕ пулсан халĕ вара лару-тăру урăхларах. Акă 2011 çулта çеç пирĕн районта вакансисен 5 ярмăркки иртрĕ те ĕнтĕ. Практика çакна кăтартса парать: пĕчĕк ярмăрккăсен – уйрăм ĕç параканăн е пĕр йышши сферăри предприятисен интересĕсене шута илсе хатĕрленĕскерсен – усси те пысăкрах. Çапла вара граждансен пĕр-пĕр категорийĕ, сăмахран, çул çитмен çамрăксем те, ĕç тупма пултараççĕ.

Çул çитменнисем пирки сăмах пуçарнăран. Çуллахи вăхăтра, вĕренӳ çулĕнчи ытти вăхăтри каникул тапхăрĕнче те çул çитменнисем хăйсен вăхăтне усăллă иртерччĕр, йĕркене пăсассинчен аякра тăччăр тесе вĕсене вăхăтлăх ĕçпе тивĕçтеретпĕр.

Кăçалхи пилĕк ярмăрккăна пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен представителĕсем хутшăнчĕç. Ярмаркkăра пулнă çул çитмен 338 çамрăкран 280-шĕ вăхăтлăх ĕçе вырнаçрĕ. Çав вăхăтрах ярмăрккăна хутшăннисем професси тĕлĕшпе консультаци илме те пултарчĕç. Çакă вара малашне професси суйласа илес ыйтăва уçăмлатма май парать.

Июль уйăхĕнче районти ĕçпе тивĕçтерекен центра ытларах алла диплом илнĕ выпускниксем пулăшу ыйтма килеççĕ. Вĕрентӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухнă çамрăксене стажировкăна тĕрлĕ организацисене вырнаçтарма май паракан ятарлă программа ĕçлет: Чăваш Республикинчи ĕç рынокĕнче йывăрлăха чакарма май паракан тĕллевлĕ программа. Вăл 2009 çулта ĕçлеме пуçларĕ.

***Программăпа килĕшӳллĕн кăçал та районта выпускниксем валли ĕç вакансийĕсен специализациленĕ ярмăркки иртет. Ăна июлĕн 21-мĕшĕнче иртерме палăртса хутăмăр. Çапла вара «Моргаушская» МСО» акционерсен хупă пĕрлешĕвне, Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райповĕсене, «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă пĕрлешĕве, «Моргаушскавтотехсервис» акционерсен уçă пĕрлешĕвне стажировкăна вырнаçма май пулать. Ярмăрккăна бухгалтер специальноçне алла илнисене, юридици пĕлĕвне илнисене, инженерсене, штукатур-малярсене, экономистсене тата ыттисене те чĕнетпĕр.***

**И. ДИМИТРИЕВА,**
**районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçин тивĕçĕсене туса пыраканĕ.**

## Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи июнĕн 7-мĕшĕнчи 512 № йышăнăвĕпе Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăх механизаторне **Николай Леонидович АРКАДЬЕВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи июнĕн 3-мĕшĕнчи 501 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессин сферинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Алевтина Васильевна АНДРЕЕВĂНА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин апат-çимĕç таварĕсен сутуçине;

– ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Владимир Викторович КУЗНЕЦОВА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин машинист-трактористне;

– çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Зоя Тимофеевна ПРОКОПЬЕВĂНА**, Очăкассинчи пуçламăш шкул-ача сачĕн пуçламăш классен учительне.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи майăн 14-мĕшĕнчи 528 № йышăнăвĕпе сывлăх сыхлавĕнчи çитĕнӳсемшĕн тата тӳрĕ кăмăлпа нумай çул ĕçленĕшĕн

– «Муркашри тĕп больница» сывлăх сыхлавĕн муниципаллă учрежденийĕнче вăй хуракан невролог врача **Валериан Николаевич ВАСИЛЬЕВА**;

– «Муркашри тĕп больница» сывлăх сыхлавĕн муниципаллă учрежденийĕнчи ача-пăча уйрăмĕн заведующине, педиатр врача **Светлана Петровна ВАСИЛЬЕВĂНА;**

– «Муркашри тĕп больница» сывлăх сыхлавĕн муниципаллă учрежденийĕнче вăй хуракан анестезиолог-реаниматолога **Галина Николаевна КУЗНЕЦОВĂНА;**

– «Муркашри 2 № тĕп больница» сывлăх сыхлавĕн муниципаллă учрежденийĕнчи терапи уйрăмĕн заведующине **Александра Владимировна КОНДРАТЬЕВĂНА;**

– «Муркашри 2 № тĕп больница» сывлăх сыхлавĕн муниципаллă учрежденийĕнчи поликлиника çумĕнчи кăнтăрлахи стационарăн мануаллă терапи врачне **Юрий Михайлович ТРОФИМОВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

# Ирĕкрен хăтарнă

## Прокуратурăра

**Чылайăшĕ астăвать пулĕ çĕнĕ çулăн иккĕмĕш кунĕнче Исетерккĕ ялĕнче пĕр киревсĕр ĕç пулса иртнине. Çакăн сăлтавĕ вара – эрех ĕçсе çын картĕнчен тухни.**

Январĕн 2-мĕшĕнче районти шалти ĕçсен пайĕн «Шырав» ушкăнĕ кулленхи ĕçре пулнă. Милици сотрудникĕсем Исетерккĕ ялĕ çывăхĕнчен иртекен машинăсене тĕрĕсленĕ. Вăçкасси енчен пысăк хăвăртлăхпа килекен хĕрлĕ тĕслĕ ВАЗ-2109 çăмăл автомашинăна та çак тĕллевпех чарма шутланă. Анчах та милици ĕçченĕсем чарма ыйтсан та водитель чарăнман. Йĕрке хуралçисен вара вĕсем хыççăн ыткăнма тивнĕ, Исетерккĕ ялваррине çитнĕ, ӳсĕр çамрăксен автомашина çăрине илнĕ.

Шалта ларакан Е.В. Арсентьев водитель те, А.Ю. Максимов пассажир та ӳсĕр пулнă. Тĕрĕслев иртерме вĕсене машина çине лартнă. Машина вара водителĕн мар, урăх çыннăн, çитменнине тата документсем те пулман. Вĕсем масар çинчен таврăннине пĕлтернĕ. Клуб та çавăнтах пулнăран пĕр самантрах пĕрин çуралнă кунне уявланă 18-20 çулхи ӳсĕр яш-кĕрĕм пухăннă, юлташĕсене хăтарма пикеннĕ. Вĕсене айăпламалла мар тесе тата хăтарма ыйтнă. Çакăнпа килĕшмен йĕрке хуралçисене тискерле хĕнеме пуçланă, тумтире çĕтнĕ, киревсĕр сăмахсемпе кӳрентернĕ. Çапăçу пуçаруçи вара Е. Арсентьев пулнă. Урса кайнă çамрăксенчен пакунлисем вĕçерĕнсе тухнă чух машина юр ăшне анса ларнă. Е. Арсентьевпа А. Максимов вĕсенчен çапах хăпман-ха, çиллине ниçта шăнарайманскерсем татах та хĕненĕ. Урса кайнă çамрăк çынсен ушкăнĕ машинăна кирпĕчпе çĕмĕрме пуçланă, ăна ӳпĕнтерме пикеннĕ. Самай суранланнă милици ĕçченĕсен хушма пулăшу ыйтма тата сиплев курсĕ иртерме тивнĕ. Çамрăксен ушкăнне шалти ĕçсен пайне илсе çитернĕ, арестленĕ.

Çапла вара 1991 çулта çуралнă Е.В. Арсентьев РФ УК 318 статйин 1 пайĕнче пăхнă йĕркене сĕмсĕррĕн пăснă. Вăл хăй айăпне туллин йышăннă тата ӳкĕннĕ. Ăна ирĕкрен хăтармасăр юсама çуккине тата ытти фактсене шута илсе айăплă çынна икĕ çуллăх ирĕкрен хăтарма йышăннă. Çав вăхăта вăл колони-поселенинче ирттерĕ.

1992 çулта çуралнă А.Ю. Максимов та çав ушкăнрах пулнă, анчах та вăл хăй айăпне пачах та йышăнмасть. Ăна урăх çынпа пăтраштарма пултарнă тесе айăпа урăх яш çине ярать. Анчах та инкек тӳснĕ милици сотрудникĕсем ăна аванах уйăраççĕ. Следстви ĕçĕсем пынă май вăл тĕрĕслĕхе пытарма тăрăшать, чăрмав кӳрет. Çапах та ку енĕпе яваплисем вăл айăплă пулнине чăннипех те çирĕплетеççĕ. Çапла вара çӳлерех асăннă преступленишĕн ăна виçĕ çуллăх ирĕкрен хăтармалла тăваççĕ. Вăл та çитес вăхăта колони-поселенинче ирттерĕ.

**Эпĕ вара, патшалăх айăплавçи пулнă май, çакна палăртса хăварасшăн. Кирек епле ĕçĕн те вĕçĕ пур, акă мĕн патне илсе çитерчĕ те ĕнтĕ эрех тата чарусăрлăх. Çавăнпа та харпăр хăйне вăхăтра чарма пĕлмелле, çыннăн çын пек пулмалла. Тунă айăпа вара йышăнма пĕлмелле. Вăл вăхăтра милици сотрудникĕсем хăйсен тивĕçне пурнăçланă, общество хăрушсăрлăхĕшĕн тăрăшнă. Саккун вара кашни гражданина хӳтĕлет, хăй тивĕçне пурнăçланă вăхăтра инкек тӳсекене ытларах та.**

**Ю. СЕМЕНОВ,**
**район прокурорĕн çумĕ,**
**юстици советникĕ.**

## Аукцион

**Извещение о проведении аукциона на право заключения договоров купли-продажи земельных участков**

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе, открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров купли-продажи (далее - аукцион) земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановления администрации Моргаушского района Чувашской Республики «О проведении открытого аукциона на право заключения договоров купли-продажи земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики» **от 22.06.2011 №552**, «Об утверждении перечня земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района, выставляемых на торги (аукцион, конкурс)» от 22.06.2011 № 552.

**Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов:** 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: imu4@morgau.cap.ru, http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71

**Контактные лица:** Петров А.В., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66.

**Характеристика объектов купли-продажи:**

**Лот №1** - земельный участок с кадастровым номером 21:17:061901:1260, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Новая, общей площадью 1796 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеется

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 15600.00 (пятнадцать тысяч шестьсот) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №2** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:110101:153, категории «земли сельскохозяйственного назначения», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Тереси, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:110101, общей площадью 4000 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** - 7300.00 (семь тысяч триста) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №3** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:091201:132, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Калмыково, ул. Кооперативная, общей площадью 804 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** - 9300.00 (девять тысяч триста) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Информация о проведении аукциона:**

**Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:**

**1.** Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 312 по рабочим дням с 9.00 до 15.00 по адресу организатора аукциона со дня опубликования извещения о проведении аукциона в районной газете «Сентеру ялаве» и размещения его на официальном сайте органов местного самоуправления - Моргаушский район Чувашской Республики в сети Интернет в разделе «Объявления».

**2.** Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – Администрация Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123000012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810775140000005 в Чувашском ОСБ №8613 г. Чебоксары, кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 5-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

**3**. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц - для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей - для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность - для физических лиц.

**4.** Физическое лицо предъявляет документ, удостоверяющий личность. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется доверенность.

**5.** Юридическое лицо дополнительно прилагает к заявке нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельства о государственной регистрации юридического лица, а также выписку из решения уполномоченного органа юридического лица о совершении сделки (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент) (кроме участия в аукционе на право заключения договора купли-продажи земельного участка для индивидуального жилищного строительства).

Заявителем предоставляется **опись документов** в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Сроки приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – **с 29 июня 2011 г. по 29 июля 2011 г.**

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе, в том числе с формой заявки и проектом договора аренды земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. №312, а также на официальном сайте органов местного самоуправления - Моргаушский район Чувашской Республики в сети Интернет в разделе «Объявления».

**Требования к участникам аукциона:**

В аукционе на право заключения договоров купли-продажи земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, состоится на заседании Комиссии - **2 августа 2011 г. в 10.00 часов по адресу организатора аукциона.**

Ознакомление с земельным участком на местности: в рабочее время по предварительному согласованию с представителем отдела имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену приобретения в собственность земельного участка.

По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора купли-продажи земельного участка.

Договор купли-продажи земельного участка заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола.

Определение участников аукциона состоится **3 августа 2011 года по месту нахождения организатора конкурса:** 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, малый зал заседаний, 3 этаж. Время проведения открытого аукциона (по московскому времени): Лот №1- 9.00, Лот №2 – 9.20, Лот №3 – 9.40.

## Объявление

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:101102:7, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д.Адабай, ул. Новая, д. 15, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 3971 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

# Çитес вăхăтра – хушма пулăшу

**Патшалăх пулăшăвĕпе усă курмалла**

***Çулсеренех çанталăк çĕр ĕçченне тĕрĕслет. Кăçал акă ăнса пулнă ешĕл курăка тăтăш çумăр çунăран типĕтсе кĕртейместпĕр. Иртнĕ çул вара ытла хĕвел пĕçертнипе ӳсен-тăран ӳсеймерĕ. Хĕл каçмалăх выльăх апачĕ янтăласси чĕр нуша пулчĕ. Çапах та ытлăн-çитлĕн ку йывăрлăха çĕнтерме пултартăмăр. Ял çыннине патшалăх та тĕртсех ямарĕ, выльăх апачĕ туянма пĕр пин тенкĕ ытла укçа уйрăм счетсем çине куçарса пачĕ. Çак тĕллевпех татах та хушма пулăшу пуласса шантарнăччĕ. Халĕ вара çав тапхăр çитнине пĕлтерчĕç. Ку йĕркепе тĕплĕнрех паллаштарма эпĕ Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин финанспа кредит политикин пайĕн тĕп специалистне О.В. МАКАРОВĂНА калаçăва чĕнтĕм.***

**– Ольга Витальевна, пулăшу тивĕçес йĕркепе тĕплĕн паллаштарсамăр тархасшăн?**

– Чăваш Республикин «О республиканском бюджете Чувашской Республики на 2011 год и на плановый период 2012 и 2013 годов» Саккунĕпе килĕшӳллĕн ку пулăшу уйрăм хушма хуçалăхра ĕнесен йышне сыхласа хăваракан çынсене пырса тивет. Субсидие çĕр ĕçченне пулăшас, çапла майпа ĕнесен йышне тата сĕт туса илессине сыхласа хăварас тĕллевпе уйăраççĕ. Ку пулăшу вăл выльăх-чĕрлĕх валли апат туянмалли укçа. Патшалăх пулăшăвĕн пĕрремĕш пайне ĕне тытакансем илсе усă курчĕç те ĕнтĕ. Халĕ вара хушма пулăшу укçин иккĕмĕш пайĕ килсе çитрĕ.

**– Унăн калăпăшĕ миçе тенкĕпе танлашать-ши?**

– Ăна вара эпир халех калаймастпăр, мĕншĕн тесен укçа калăпăшĕ çынсем выльăх апачĕ туяннине çирĕплетекен документсем пухса çитерниннчен килет. Çынсене пама палăртнă пĕтĕмĕшле укçа-тенкĕне вара тĕрĕс документсем пухса çитернисем хушшинче пайласа пама тивет.

**– Пулăшăва хуçалăхри миçе ĕне пуçне шутласа параççĕ?**

– Хуçалăхра икĕ е ытларах ĕне пулсан кашниншĕнех субсиди илме ирĕк пур, паллах эсир вĕсем пирки хуçалăх кĕнеки (похозяйственная книга) çине тĕрĕс çыртарнă пулсан. Хаçат вулакансем астăваççĕ пулĕ ĕнтĕ, декабрь уйăхĕнче ку енĕпе яваплисем выльăх-чĕрлĕх йышне килренех çырса çӳрерĕç. Çавăнпа та 2011 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне палăртнă кăтартусем кирлĕ. Пулăшăвăн пĕрремĕш пайне те çав кăтартăва шута илсе пачĕç.

**– Ял çыннин чи малтан хăш специалист патне каймалла-ха?**

– Ку ĕç пирки июлĕн 11-мĕшĕнчен кая юлмасăр ял тăрăхĕсен хутсене ман пата илсе çитермелле (маларах пулсан вара аванрах та). Чи малтан вара çынсен ял тăрăхне каймалла, субсиди ыйтса заявлени çырмалла. Унта мĕн хаклăх апат туяннине те кăтартмалла. Çавăн пекех апат туяннине çирĕплетекен документ тата ял тăрăхĕнчен хуçалăх кĕнеки çинчен (выписка из похозяйственной книги) çырни пулмалла. Эпир вара ял тăрăхĕсенчен илсе килнĕ документсен тĕрĕслĕхне пăхса тухатпăр, хăш-пĕр кăлтăк тупăнсан вĕсене каялла паратпăр. Çынсен уйрăм счечĕсем çине субсиди июль уйăхĕн вĕçĕнче куçма тытăнать.

**– Енчен те апат туяннине çирĕплетекен документ çук пулсан?**

– Апла пулсан ĕне усракан çын вăл укçана тивĕçеймест.

**– Пускилрен е ытти кирек епле уйрăм çынран апат туяннине епле çирĕплетме пулать, сăмахпа кăна каланине шута илеççĕ-и?**

– Паллах, çук. Кун пек тĕслĕхре ятарлă акт (акт приема-передачи кормов по договору, акт приема-передачи денежных средств) çырмалла, килĕшӳ (договор купли-продажи кормов между физическими лицами за наличный расчет) тумалла.

**– Предпринимательсем те кăçал апат чылай турттарса сутрĕç. Туянакансем вара квитанци тавраш ыйтма та шутламарĕç. Ун йышшисен мĕн тумалла-ха тата?**

– Çавăнпа та кирек епле суту-илӳ ĕçĕнче те квитанци, накладной, тавар тата касса чекĕ илмеллех. Çаксене вăхăтра илменнисен вара çӳлерех асăннă документсене хатĕрлемелле.

**– Халăх валли выльăх апачĕ кӳрессипе райпо лавккисем уйрăмах тимлерĕç. Лавккаран апат туяннă çын çăмăллăнах тивĕçлĕ документ илме пултарать пулĕ?**

– Лавкка сутуçисем туянакана тавар чекĕ пама тивĕç.

**– Çак пулăшăва хăш шайри бюджетран саплаштараççĕ-ха?**

– Уйрăм хушма хуçалăх тытса пыракансем валли уйăракан субсиди федераллă тата республика бюджечĕсенчен килет.

**– Пулăшу укçине суя документсем тăратса илес текенсем те тупăнĕç...**

– Тĕрлĕрен пулма пултарать, документсене вара тĕрĕс хатĕрлеме ыйтас килет. Заявлени çырса тăратнă документсем тĕплĕ тĕрĕслев витĕр тухаççĕ. Енчен те ултавсуя çиеле тухрĕ пулсан Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерстви субсидие вăтăр кун хушшинче каялла тавăрса памалли пирки хут ярса парать. Çапах та çын çак укçа-тенкĕне каялла памарĕ пулсан суд шыраса илет.

**– Калаçăва вĕçленĕ май сире Оринин ял тăрăхĕнчен килнĕ пĕр ыйтăва парас килет. «Мартăн 31-мĕшĕнче пĕр чирлĕ çынтан ĕне туянтăм. Унччен вара манăн ĕне пулман, çавăнпа та ял тăрăхĕнчи хуçалăх кĕнекине (похозяйственная книга) кĕреймен. Эпĕ ĕне валли тăтăшах тырă хывăхĕ тата ытти апат туянатăп, унтан панă чексене те упратăп. Патшалăх пулăшăвне илес тесе ял тăрăхне кайрăм, вĕсем манăн хурава тивĕçтермерĕç. Тĕрĕс турĕçши вĕсем, манăн мĕн тумалла?»**

– Эсир туяннă ĕне хуçалăх кĕнекине кĕреймен, çавăнпа та сирĕн ыйтăва тивĕçтермен. Çавăн пекех пăшăрхантаракан тепĕр самант та пур. Хĕл каçнă пăру е чупнă тына ĕне шутне кĕмеççĕ, хĕлле пăрулана пулсан та. Мĕншĕн тесен хуçалăх кĕнекине вĕсене тына шучĕпе кĕртнĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**



**Миграци службинчен**

## Паспорт илес ĕçри çĕнĕлĕхсем

***Паспорт илес тата улăштарас йĕркене тăтăшах улшăнусем, çĕнĕлĕхсем кĕртеççĕ. Çавна май ку йĕрке халăхра тĕрлĕ ыйту тата ăнланманлăх çуратать. Хăшпĕр çĕнĕлĕхе усăмлатма эпĕ Федераллă миграци службин районти территори пункчĕн çĕнĕ пуçлăхĕпе Л.Г. ПЛЕЧОВĂПА курса калаçрăм.***

**– Любовь Геннадьевна, ют патшалăхра Раççей Федерацийĕн гражданинĕ пулнине ĕнентерекен документа – паспорта – çĕнĕлĕхсем кĕртрĕç, çав йĕркепе паллаштарсамăр?**

– 2010 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çĕнĕ паспорт вăя кĕчĕ. Ăна ют çĕр-шывсене час-часах тухса çӳрекенсем илме пултараççĕ. Паспорт çинче электронлă носитель пур, ăна вунă çуллăха параççĕ.

Çав хушăрах кивĕ йышши паспорт та вăйрах юлать, кăмăл тăвакансем ăна та илме пултараççĕ. Анчах та унăн вăйĕ пилĕк çултан вĕçленет. Палăртнă вăхăт вĕçленсен вăл паспорта урăххипе улăштарма тивет.

**– Сирĕн пата вара мĕнле документсем хатĕрлесе памалла?**

– Тĕп документсем çаксем шутланаççĕ: анкета (икĕ экземплярпа) – ăна ĕçрен çирĕплетмелле, патшалăх пошлинине тӳленине çирĕплетекен квитанци, ĕç кĕнекин копийĕ (ĕçрен çирĕплетмелле), тĕслĕ сăн ӳкерчĕк, çар билечĕ, РФ гражданинĕн паспорчĕн ксерокопийĕ. Кивĕ йышши паспорта илме ыйтса çырнă заявление пирĕн пата илсе килмелле. Эпир çак адреспа вырнаçнă: Муркаш сали, Мир урамĕ, 9 çурт, ыйтусем пулсан 63-4-90 номерпе шăнкăравласа пĕлме пулать.

**Р. МАКАРОВА.**

# Хамăра йĕркеллĕ тытмалла

**Шывра асăрханулла пулăр**

Шăрăх çанталăк кашнинех шыв хĕрринче канма, шыва кĕрсе уçăлма чĕнет.

Пирĕн районта та шыва кĕмелли тата шыв хĕрринче канмалли вырăнсем çителĕклĕ: капиталлă гидротехника сооруженийĕсем çитмĕл (пысăккисем те, пĕчĕккисем те), пысăках мар пĕвесемпе кӳлĕсем, районăн çурçĕр чиккипе Атăл юхса выртать. Анчах та çаксемпе тĕлсĕр, асăрханмасăр усă курсан вĕсем питĕ пысăк хăрушлăх кăларса тăратма та пултараççĕ.

Шыв хĕрринче канас е шыва кĕрес текенĕн чи малтанах ишме пĕлмелле. Çакăнпа пĕрлех ишме пĕлетĕп тесе шывра тĕрлĕ хăрушлăх пулма пултарассине те манмалла мар. Кашни çулах Раççейре 15–20 пин çынна яхăн шывра путса вилет. Пирĕн районта юлашки пилĕк çулта 43 çын путса вилнĕ, вĕсен шутĕнче – пĕр ача. Каласа хăвармалла, вĕсенчен ытларахăшĕ ишме пĕлнĕ.

Статистикăна тишкерсен шывра путакансенчен ытларахăшĕ ишме пĕлекен арçынсем пулни курăнать. Вĕсем шывра путнин сăлтавĕ вара – эрех-сăра ĕçнĕ хыççăн шыва кĕни, чăрсăрлăх, анчах та вăй çителĕксĕр пулни, шыври экстремаллă лару-тăрура хăйсене тытма пĕлменни. Çавăнпа та хамăра шыв çинче мĕнле тытмаллине аса илтерни никамшăн та ытлашши пулмĕ.

Сăмах май ятарлă правилăсене шыв çинче çăлав обществи ĕçлеме пуçланă вăхăтрах – 1872 çулта – йĕркелесе çырса хунă. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2006 çулхи майăн 26-мĕшĕнче çирĕплетнĕ постановление те никам та улăштарман-ха. Унта шăпах шыв çинче çынсен пурнăçне хӳтĕлесси çинчен каланă.

Пĕлмен вырăнта нихăçан та пĕччен шыва ан кĕрĕр. Тепĕр тесен пĕлнĕ вырăнта та. Инçе ишсе кайма ан васкăр, уйрăмах сирĕн юлташсем япăхрах ишеççĕ пулсан. Шыва кĕме палăртнă вырăнта кăна шыва кĕмелле.

Сивĕ шыва вăраххăн кĕмелле, уйрăмах эсир кăçал пĕрремĕш хут шыва кĕретĕр пулсан. Мĕншĕн тесен ура шăнăрĕ туртса лартма е тата пуç çаврăнма пултарать.

Пĕлмен вырăнта шыва тӳрех сикмелле мар. Тепĕр чух çак вилĕм патнех илсе çитерет. Шыв тĕпĕнче темĕн те пулма пултарать-çке-ха: чул та, тимĕр-тăмăр та...

Шывра катерсем, кимĕсем çӳреççĕ пулсан унта шыва кĕмелле мар. Кĕретĕр пулсан вĕсенчен аякра пулма тăрăшмалла.

Шывра кашнинех хăйне йĕркеллĕ тытмалла. Выляма пуçласан хăвăрăн юлташусене куçран вĕçертмелле мар. Пĕрпĕрне шывра вылямалла путармалла мар, шӳтлесе «путатăп, пулăшăр!» тесе те ан кăшкăрашăр.

Вĕрсе хăпартмалли матраспа е камерăпа аслисемсĕр усă курма юрамасть. Матраса, сăмахран, шыв юххи инçете илсе кайма е вăл пушанса кайма пултарать.

Япăх ишетĕр пулсан çыран хĕрринчен инçе каймалла мар, кирек хăш вăхăтра та урасем шыв тĕпне лекчĕр.

Шывра ура шăнăрĕ туртса лартрĕ пулсан самантлăх шыва чăмса урана тӳрлетмелле, уран пысăк пӳрнинчен тытса ура тупанне хăвăр çине туртмалла.

Инçе ишсе кайнă хыççăн ывăннине сисрĕр пулсан каялла таврăнччен ик-виçĕ минут çурăм çинче выртса, алăсемпе кăшт кăна хусканусем туса канса илмелле.

Шывра шăлсем пĕрпĕрин çумне перĕнми пуличчен ан тăрăр. Шăнăр туртса лартсан шывран тӳрех тухмалла.

Лайăх ишме пĕлетĕп тесен те пулса тухма пултаракан лару-тăрăва шута хумалла.

Çак тата ытти хăш-пĕр правилăсене район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи майăн 18-мĕшĕнчи 429 номерĕ постановленийĕпе çирĕплетнĕ.

Хамăрăн пурнăç пирки ытларах хамăрăнах шутламалла, ăна хамăрăнах упрамалла. Апла пулсан хăрушсăрлăх йĕркисем пирки ан манăр.

**Н. МИЛЮТИН, район администрацийĕн ГО тата ЧС секторĕн ертӳçи.**

**Хăрушсăрлăх**

## Çиçĕм-аслати чухне

Çиçĕм-аслати чухне эсир вăрманта пулсан унти çӳллĕ мар ӳсекен йывăç-тĕм айне пытанмалла. Çӳллĕ ӳсекен йывăçсем, уйрăмах хыр, юман тата тирĕк, айне пытанса лармалла мар.

Шывра пулсан вара тӳрех унтан тухмалла. Шыв хĕрринчен аяккарах каймалла. Çӳллĕ вырăнта лармалла мар, лапама анмалла.

Уçă уйра пулнă чух теприсем аслати вăхăтĕнче çĕр çине выртса питĕ тĕрĕс мар тăваççĕ. Уйра айлăмрах вырăн тупса чĕркуççисене алăпа ыталаса илсе куклен-се лармалла.

Аслати эсир урамра спорт занятийĕсенче чухне пуçлансан сикмечупма чарăнмалла. Металран тунă хатĕрсене (мотоцикл, велосипед тата ытти те) инçерех илсе хурăр. Вĕсенчен 20-30 метр чухлĕ аяккарах пулăр.

Пӳртсенче чӳрече, алăк, вентиляци шăтăкĕсене тата тĕтĕм çулĕсене хупмалла. Çав вăхăтра кăмакара вутă çунтармалла мар, мĕншĕн тесен тĕтĕмпе тухакан пысăк температурăллă газсен аслатие хирĕç тăраслăхĕ питĕ пĕчĕк. Телефонпа калаçмалла мар: тепĕр чухне çиçĕм тункатасем хушшинчи пралуксене те лекме пултарать.

Çиçĕм çиçнĕ вăхăтра электричество пралукĕсем, çиçĕме сирекен хатĕрсем патне, çуртсен çивиттийĕсем çинчен шыв юхса анакан трубасем патне пымалла мар. Антенна çывăхĕнчен пăрăнмалла. Май пур таран телевизор, радио тата электричествăпа ĕçлекен ытти хатĕрсене те ĕçлеме чарăр. Чӳрече çывăхĕнче ан тăрăр.

Аслати сире машинăра «хăваласа çитрĕ» пулсан машинăран ан тухăр, радиоприемник антеннине антарăр, кантăксене хуплăр.

Сирĕн пурнăçа сиен кӳрекен лару-тăру сиксе тухрĕ пулсан, паллах, пулăшу ыйтса шăнкăравламалла: 01 е 112 (кĕсье телефонĕпе тӳлевсĕрех).

**Пичете РФ Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

# Çамрăклах «хушма тупăш» ĕçлесе илнĕ

**Следстви пайĕнчен**

***Çу каçипе çанă тавăрса ĕçленĕ çын кĕр кунĕсенче хăй туса илнĕ тухăçпа савăнать. Калмăкра çуралса ÿснĕ каччă вара тухăç ĕçлемесĕр те пулать тенĕ имĕш.***

«Хăйĕн ампарĕсем» пуш-пушă пулнăран-ши, пĕлтĕр кĕркунне Васçли (ятне улăштарнă) тăруккăн пуйма шутлать. Шурчаран Рыккакассине çитерекен çул тăрăх пĕрре мар иртсе çӳренĕ-ха вăл. Çапла вара пĕррехинче Ярапайкассинчи пушар хуралĕн çурчĕ çывăхĕнче çăмăл машина ларнине асăрханă.

Машина та çамрăка хăй патне ытла та вăйлă «илĕртнĕ-çке»: «Кĕрсе пăх-ха, мĕн кăна çук пулĕ сан валли кунта», – тесе кăтăкласах тăнă. Кăмăлĕпе çирĕпленсе çитеймен каччă вара «парăннă».

2000 тенкĕ тăракан аккумулятор, 1500 тенкĕлĕх магнитола самантрах çĕнĕ хуçа аллине куçаççĕ. Машинăн гайка ключĕсен пуххине те, домкрата та Васçли пуçтарса чикет.

Маларах та судпа айăпланнăран черетлĕ «ĕç» хыççăн каччă шухăша путать: «Тен айăпа йышăнса хамăнах маларах каймалла...»

2010 çулта Шупашкар хулинчи Ленин район сучĕпе 2 çул та 2 уйăха условлă майпа айăпланнăскер ун чухне те хăйне йĕркеллĕ тытман çав вăл, наказание ирĕкрен хăтарассипе ылмаштарма тивнĕ. Ăна пурнăçлас тапхăр та вĕçленмен-ха.

Шăпах çакна шута илсе ĕнтĕ кăçалхи мартăн 15-мĕшĕнче Муркаш район сучĕ ăна пĕтĕмĕшле наказанин тапхăрне 3 çуллăха тӳрленӳ колонине яма палăртса йышăнать.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕ çумĕнчи следстви уйрăмĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

**Милици хроникинчен**

## Кун пекки те пулать

Тяпакасси ялĕнчи 40 çултан иртнĕ хĕрарăм пĕртте алă усса лармасть. Хăйĕнчен самай кĕçĕнреххи вара ăна мĕнпе кӳрентернĕ-ши? Темĕнле сăлтавпа ĕнтĕ асли кĕçĕннине турилккепе пуçĕнчен перет, çакăнпа лăпланмасть-ха вăл, унăн алă пӳрнине суранлатать.

## Атте-анне хисепе тивĕç

Тавах, атте-анне, кун-çул парнеленĕшĕн, тесе шăрçалаççĕ сăвă-юрăра. Анчах мĕншĕн-ха çакă пурнăçпа чăн килмест, тен эпир çынлăха çухатнă? Анаткассинчи пĕр арçын совесть, çынлăх тенине пачах та маннă пулас, пĕр шелсĕр ватă ашшĕ çине алă çĕкленĕ. Самай суранланнăскерĕн хирурги уйрăмĕнче вăй хуракансенчен пулăшу ыйтма тивнĕ.

## Харкашу ырри патне илсе пымасть

Пĕр-пĕринпе харкашса хутшăнăва татма вăхăт нумаях та кирлĕ мар çав. Ним çук çĕртенех çын çине алă çĕклеме пулать иккен, анчах килĕштерсе пурăннине нимĕн те çитмест çав. Акă çак кунсенче Нӳрет ялĕ çывăхĕнчи уйра Актайра пурăнакан арçын пĕр шелсĕр хăйĕнчен самай аслă çын çине алă çĕклет, ăна çапать. Мĕн вĕчĕрхентернĕ-ши 1964 çулта çуралнă арçынна çав териех пуçтахланма. Халĕ ку ĕç пирки йĕрке хуралçисем тимлеççĕ.

## Укçа-тенкĕ хирĕçтерет

Укçа-тенкĕ çынна хирĕçтерет, çынна кивçен панă пулсан вара ăна калаçса татăлнă вăхăтра каялла тавăрас килет. Хăш чухне вара ултавçăсем шуçлак пăр çине кăна лартса хăвараççĕ. Ун пек ан пултăр тесен асăрханулăх та, тимлĕх те кирлĕ. Акă Купăрля ялĕнчи арçын Ярапайкассинчи хĕрарăма пилĕк çул ĕнтĕ «çуллă» сăмах калаçа кăна кивçен укçана пама шантарать. Анчах та пуш сăмаха кĕсьери укçапа улăштараймăн çав. Ултавçă арçын 138 пин тенкĕ кивçен илнĕ те халĕ те тавăрма шутламасть-ха.

## Ют çын пурлăхĕ ан илĕрттĕр

Ак тамаша, намăса та пĕлми пулатпăр пулмалла. Пĕр именмесĕрех çыннăн пурлăхне вăрлатпăр, çĕмĕретпĕр. Мĕн тенĕ пулĕччĕç-ши ватă асатте-асаннесем çакăн пеккине асăрхасан. Хамăра ирĕке яриччен уй-хирте вăй хурсан усăллăрах пулмĕ-ши тата? Акă пĕр паллă мар çын Мăн Шашкар ялĕнче Т-25 трактор çăрине ватса кĕрет, кабинăна кĕрсе çăра çыххине, автомагнитолăна вăрласа тухать, çапла майпа вăл пуйма шутланă пулĕ ĕнтĕ. Халĕ «кукăр алăллă» çынна йĕрке хуралçисем шыраççĕ.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

**Ыйту – хурав**

# Курăка складра йышăнаççĕ

***Хаçатăн иртнĕ номерĕнче Муркаш райпо лавккисенче эмел курăкĕсем пуçтарасси çинчен пĕлтернĕччĕ. Типĕтнĕ курăка центрти лавккасенче те пухаççĕ-ши?***

**Редакцие шăнкăравланинчен.**

– Типĕтнĕ эмел курăкне Муркашра пурăнакансен кунта вырнаçнă лавккасене мар, ятарлă хатĕрлев складне леçсе памалла. Ялта вырнаçнă лавккасенче вара пуринче те халăхран эмел курăкĕсене пуçтарассине йĕркеленĕ, – çапла хурав пачĕç Муркаш райповĕнче.

**Следстви комитетĕнчен**

# Пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă

Шел пулин те, харкашу ырри патне илсе пымастех, сăмах хыççăн сăмах тухать, хирĕçĕве пуçарать. Акă Елшик ялĕнче те çавăн пекех пулса тухнă, анчах çакă синкерпе вĕçленнĕ. Икĕ арçын пĕр çурт çывăхĕнче тĕл пулнă. Пĕри ăна-кăна ăнкарайманскер теприне çапать, иккĕмĕшĕ вара тимĕр бетон плитана çапăнса суранланать. Йывăр сурана пула вăл тăна кĕреймесĕрех Муркашри тĕп больницăн реанимаци уйрăмĕнче вилсе каять. Халĕ вара 1962 çулта çуралнă арçын тĕлĕшпе следстви пырать.

**В. ДОЛГОВ,**
**уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсен следователĕ.**

**Медицинское страхование**

# Вниманию граждан, застрахованных по обязательному медицинскому страхованию!

Территориальный фонд обязательного медицинского страхования Чувашской Республики напоминает, что в соответствии со статьей 51 Федерального закона от 29 ноября 2010 г. № 326-ФЗ «Об обязательном медицинском страховании в Российской Федерации» полисы обязательного медицинского страхования, выданные лицам, застрахованным по обязательному медицинскому страхованию (ОМС) до 1 января 2011 года, являются действующими до их замены на полисы ОМС единого образца вне зависимости от даты окончания действия полиса, социального статуса и места работы застрахованного.

Сегодня гражданин может получить медицинскую помощь по имеющемуся у него полису ОМС, который не нужно менять в срочном порядке, кроме случаев прекращения деятельности страховой медицинской организации.

В случае прекращения деятельности страховой медицинской организации, в которой был застрахован гражданин, он должен в течении двух месяцев подать заявление о выборе (замене) страховой медицинской организации в другую страховую медицинскую организацию.

Полисы ОМС единого образца выдаются прежде всего новорожденным, тем, кто раньше по какой-либо причине не имел полиса ОМС, а так же при смене фамилии, имени, отчества, места жительства (при переезде в другой субъект Российской Федерации), а так же при выборе (замене) страховой медицинской организации.

При обращении гражданина в страховую медицинскую организацию с заявлением о выборе (замене) страховой медицинской организации ему (при отсутствии у него полиса ОМС единого образца) выдается временное свидетельство, подтверждающее оформление полиса и удостоверяющее право на бесплатное оказание застрахованным гражданам медицинской помощи в медицинских организациях при наступлении страхового случая. Временное свидетельство действительно не более тридцати рабочих дней с даты его выдачи. За это время выдается полис ОМС единого образца.

Дополнительную информацию можно получить в своей страховой медицинской организации, по телефону «горячей линии» Территориального фонда ОМС Чувашской Республики (8352) 63-29-46, а так же на его официальном сайте www.foms.chuvashia.ru.

**Прогноз погоды**

| | среда 29 июня | | | | четверг 30 июня | | | | пятница 1 июля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +16 | +25 | +26 | +20 | +16 | +21 | +25 | +19 | +14 | +22 | +27 | +20 |
| Давление мм | 747 | 747 | 746 | 747 | 748 | 748 | 747 | 748 | 748 | 748 | 747 | 747 |
| Влажность % | 99 | 63 | 59 | 76 | 94 | 67 | 46 | 51 | 67 | 49 | 38 | 61 |
| Ветер | С | С | З | С-З | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В | В | В |
| м/с | 1 | 1 | 1 | 2 | 3 | 5 | 4 | 3 | 2 | 4 | 5 | 2 |
| Солнце восход/заход | | 04:10 | 21:42 | | | 04:11 | 21:42 | | | 04:11 | 21:42 | |
| Луна восход/заход | | 02:14 | 20:04 | | | 03:04 | 20:54 | | | 04:08 | 21:32 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

**Тав тăватăп**

Эпĕ çамрăк мар ĕнтĕ. Тăхăр вунă çул урлă та каçрăм. Пурнăçра темĕн те курма лекрĕ. Акă çу уйăхĕн пуçламăшĕнче, çумăрлă çанталăкра, шуса ӳкрĕм, йывăрах суранлантăм. Мана çийĕнчех Муркаш больницин хирурги уйрăмне илсе çитерчĕç. Çăмăл мар операци чăтса ирттерме лекрĕ. Асăннă уйрăмри медицина ĕçченĕсене, уйрăмах Л.Н. Андреевпа А.П. Афанасьев травматологсене, И.А. Воробьев анестезиолога, С.Г. Алексеева анестезиологи сестрине тата О.В. Медова операци сестрине хăйсен пултарулăхĕпе тата ĕçри тăрăшулăхĕпе мана çĕнĕрен пурнăç çулĕ çине çирĕппĕнех тăма пулăшнăшăн чун-чĕререн тав тăватăп, ырлăх-сывлăх, ĕçре яланах ăнăçу сунатăп.

**Ф.В. Савельев, Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕ.**


**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.**

**Продаем деревянный дом с земельным участком 0,40 га в д. Кашмаши. Тел.: 8-937-373-42-28.**

* * *

**Услуги крана, 35 т., 23/32 м.**
**Тел.: 8-903-359-62-85. 4-5.**

* * *

**Тăваттăмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-903-064-03-29. 1-2.**

* * *

**СХПК «Герой» срочно принимает на постоянную и сезонные работы тракториста-машиниста, комбайнеров на зерноуборочные комбайны СК-5 «Нива», водителей грузовых автомобилей, в т. ч. на перевозку опасного груза (бензовоз) и автокрановщика на автомобильный кран. Оплата своевременная и достойная. Тел.: 67-5-79; 8-953-016-00-01, 8-953-016-00-07. 1-3.**

* * *

**Пĕрре пăруланă хура-шурă ĕне сутатпăр.**
**Тел.: 8-927-849-24-73.**

* * *

**Требуется опытная бригада для строительства кирпичного дома под ключ. Продаю сено этого года, а также бревна от дома б/у. Тел.: 8-909-304-93-08, 8-961-343-21-92.**

* * *

**В Москву требуются плотник, каменщик. Жилье предоставляется. Тел.: (8352)29-77-88.**

* * *

**Продаю дубовые дрова 1 куб. м. – 800 руб. А также имеется кругляк дубовый разной длины и диаметра. Тел.: 8-908-307-07-44. Николай.**

* * *

**Молодая семья снимет квартиру в с. Моргауши.**
**Тел.: 8-965-683-20-43.**

* * *

**Продается трактор ЮМЗ-6 с большой кабиной, со всеми агрегатами. Цена 250 тыс. руб. Скидка.**
**Тел.: 8-953-016-18-20.**

* * *

**Продаю КРН-2,1 м. Марийского машзавода за 155 тыс. руб. Доставка. Тел.: 8-906-130-61-64. 2-2.**

* * *

**Вăкăрсем, тынасем, пăрусем, сурăхсемпе такасем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 3-4.**

**Продаем доски: обрезные, необрезные, брус любого сечения, срубы из оцилиндрованного бревна. Доставка бесплатно.**
**Тел.: 8-919-679-18-11, 8-927-859-91-55. 1-5.**

**Кредитный потребительский кооператив «СОДРУЖЕСТВО»:**

**ВЫДАЕТ ЗАЙМЫ ПАЙЩИКАМ**
**на любые неотложные цели, а также на покупку и строительство жилья с использованием средств материнского капитала. Низкие процентные ставки, доступно и оперативно;**

**ПРИНИМАЕТ СБЕРЕЖЕНИЯ ПАЙЩИКОВ**
**на привлекательных условиях. Действуют льготные ставки для пенсионеров, инвалидов.**

**Наш адрес: с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23 (здание ОАО «Моргаушскавтотехсервис», 2 этаж), тел.8-919-673-42-19. 2-6.**
www.kpksodrugestvo.ru

МАГАЗИН-САЛОН **ГАЗОВЫЕ ТЕХНОЛОГИИ**
остановка п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13 (бывшее здание типографии)

**РЕАЛИЗУЕМ:**
- газовые котлы SIBERIA, АОГВ, Газлюкс (Газеко), КСГ-очаг
- газовые колонки Газеко
- газовые плиты Газлюкс
- стабилизаторы напряжения для газовых котлов
- счетчики газа, сигнализаторы
- запасные части
- газовые генераторы

**ВЫПОЛНЯЕМ:**
- проекты газификации
- квалифицированный монтаж

**АКЦИЯ! Мы привозим и устанавливаем вам газовую плиту БЕСПЛАТНО! т.: 8-987-668-04-83**

* * *

**Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), асфальт. Возможна доставка. Тел.: (8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23. 8-8.**

**КИРПИЧ**
более 500 видов и цветов
ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ
**Газосиликатные блоки**
ТК “ТЕРМИНАЛ”
г.Чебоксары, Канашское шоссе,7/1, тел.30-55-15
г. Новочебоксарск , ул. Промышленная, 41, тел.73-84-12


Çатракассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта техслужащи пулса ĕçлекен Е.Г. Петровăн

**ХУНЯМĂШĔ**

вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ НИКОЛАЕВА Н.Н.**
**Пичете панă 28.06.2011 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4337.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.